25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АВГУСТ
21
ЭРНЕКУН
195 (6130) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) райкомĕсем тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен Республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

1. **М. Д. Мешков** — Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри машинист. Мешков юлташ жнейкăпа кашни кунах 8-шар гектар тĕштырă вырать, нормăпа 5 гектар вырмалла. Унăн ĕç пахалăхĕ лайăх.

2. Елчĕк районĕнчи **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Е. Т. Мартынов**). Ленин ячĕпе тăракан колхоз 660 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 7 ĕç кунĕнче пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене вăхăтра организациленĕ.

3. **Ф. Н. Никонова** — Аслă Елчĕкри (Елчĕк р.) вăтам шкулăн учительници. Никонова юлташ кĕрхи тырăсене вырнă чухне жнейка çинче машинист пулса ĕçлесе кашни кунах норма тăрăх 5 гектар вырас вырăнне 8-шар гектар вырса пынă. Ĕç пахалăхĕ лайăх.

4. **А. Н. Афанасьев** — Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕ. Афанасьев юлташ кĕрхи тырăсене вырнă чухне жнейка çинче машинист пулса ĕçлесе кашни кунах норма тăрăх 5 гектар вырас вырăнне 10-шар гектар вырса пынă. Ĕç пахалăхĕ лайăх.

5. Елчĕк районĕнчи **«Ким» колхоз.** Çак колхоз 213 гектар çинчи ыраша 5 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене вăхăтра организациленĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Кăкăр çине çакмалли „Отличный минер" тата „Отличный сапер" знаксене çирĕплетесси çинчен

Хĕрлĕ Çарăн рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи уйрăмăнах палăракан минерсемпе саперсене хавхалантарас шутпа, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ çапла **йышăнать:**

1. Хĕрлĕ Çарăн рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли кăкăр çине çакмалли «Отличный минер» тата «Отличный сапер» знаксен тĕслĕхĕсене çирĕплетес.

2. Кăкăр çине çакмалли «Отличный минер» тата «Отличный сапер» знаксем çинчен калакан положение çирĕплетес.

3. Çак знаксене сылтăм кăкăр çинче çакса çӳремелле тăвас.

4. Çак знаксене парса наградăлама бригадăсен, дивизисен командирĕсене, армисен командующисен инженернăй войскăсем тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕсене тата вĕсенчен аслăраххисене право парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти августăн 19-мĕш.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Инçе вĕçекен авиацин 1-мĕш, 81-мĕш, 250-мĕш, 748-мĕш тата 750-мĕш полкĕсенчен инçе вĕçекен авиацин Гвардейски полкĕсем тăвасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç, Советлă тăван çĕршывшăн пынă çапăçусенче инçе вĕçекен авиацин 1-мĕш, 81-мĕш, 250-мĕш, 748-мĕш тата 750-мĕш полкĕсем паттăрлăхăн, хăюлăхăн, дисциплинăллă пулнин тата организованноçăн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса панă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç таттисыпписĕр çапăçусем туса пырса, авиацин çак полкĕсем фашистла войскăсене питех те пысăк çухатусем тӳстернĕ, аркатса тăкмаллах пырса çапса противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкнă, нимĕç захватчикĕсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пынă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç, тăван çĕршывшăн пынă çапăçусенче паттăрлăх, çирĕплĕх, хăюлăх кăтартса панăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, вĕсен личнăй составĕ геройлăх кăтартнăшăн çӳлте асăннă полксенчен çакăн пек Гвардейски полксем тунă:

1) Инçе вĕçекен авиацин 1-мĕш полкĕнчен — инçе вĕçекен авиацин 1-мĕш Гвардейски полкĕ — полк командирĕ подполковник **Б. Ф. Чирсков.**

2) Инçе вĕçекен авиацин 748-мĕш полкĕнчен — инçе вĕçекен авиацин 2-мĕш Гвардейски полкĕ — полк командирĕ подполковник **Н. В. Микрюков.**

3) Инçе вĕçекен авиацин 750-мĕш полкĕнчен — инçе вĕçекен авиацин 3-мĕш Гвардейски полкĕ — полк командирĕ подполковник **А. И. Щербаков.**

4) Инçе вĕçекен авиацин 250-мĕш полкĕнчен — инçе вĕçекен авиацин 4-мĕш Гвардейски полкĕ — полк командирĕ подполковник **Глущенко.**

5) Инçе вĕçекен авиацин 81-мĕш полкĕнчен — инçе вĕçекен авиацин 5-мĕш Гвардейски полкĕ — полк командирĕ майор **А. М. Омельченко.**

Çӳлте асăннă полксене Гварди ялавĕсем параççĕ.

Августăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем нимĕçсен Данциг, Кенигсберг тата Тильзит хулисем çине бомбăсем пăрахнă

Августăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ нимĕçсен Данциг, Кенигсберг тата Тильзит хулисенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Данциг хулинче пушарсем нумай тухнă, вĕсенчен çиччĕшĕ—вăйлă пушарсем, çав пушарсене пирĕн самолетсен экипажĕсем каялла таврăннă чухне нумайччен курнă. 16 взрыв пулни палăрнă, çав шутра 5 взрыв—вăйлă взрывсем пулнă, вăл взрывсем пулнă чухне çап-çутă çулăм ялкăшса тухнă тата хура тĕтĕм вăйлăн палкаса тухнă. Порт управленийĕн склачĕсен районĕнче тата Данцигри верьф районĕнче 10 тĕлте пушарсем тухнă тата 2 хутчен вăйлă взрыв пулни палăрнă.

Кенигсбергра бомбăсем пăрахнине пула 13 тĕлте пушарсем тухнă тата Хĕвеланăç вокзалĕн районĕнче вăйлă взрывсем пулни палăрнă.

Тильзитра 4 тĕлте пушарсем тухнă тата пĕр вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

М. И. Калинин çырăвне ăнлантарса панă хыççăн

ШАХАСАН, августăн 19-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). М. И. Калинин юлташ ялсовет председателĕсем патне янă çырăва Ямашри «Ударник» колхозра сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ татах та ӳсрĕ. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме пуçларĕç. Колхозри куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава 5-мĕш бригада пилĕк кун ĕнтĕ алăран вĕçертмест. Бригадăри 32 çынăн нормăпа куллен 3,21 гектар тырă вырмалла, вĕсем 4 гектар таран выраççĕ. Стахановкăсем М. Филиппова, А. Константинова юлташсем нормăна пĕрмаях 200-шер процент тултараççĕ.

Калинин юлташăн чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн пахалăхшăн кĕрешесси те вăйланчĕ. Малтанхи кунсенче кашни тăваткăл метр çинче 20—30 пучах хăваратчĕç пулсан, халĕ 1—2 пучах çеç курăнать. Пахалăх комиссийĕн председателĕ Кириллов юлташ колхозниксем вырнă хыççăн тĕрĕслесех тăрать.

Колхоз халĕ çурхи тырăсене вырать. Августăн 18-мĕш тĕлне 50 гектар вырнă та ĕнтĕ. Государствăна 46 центнер çĕнĕ тырă леçнĕ. 10 гектар çинчи пусана 10 пин çурăм татса шыва хутнă.

Агитатор-учительница Гаврилова юлташ колхозниксем хушшинче тăтăшах пулса, вĕсемпе калаçать, стена хаçачĕсем кăларать. Уборка пуçланнăранпа вăл 10 калаçу ирттернĕ.

С. ШАДИН.

Учительсемпе вĕренекенсем! Тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте лайăх ĕçлесе колхозниксене пример кăтартăр. Тăккаланчăксене хирĕç кĕрешĕр!

Агитаторсем уборкăра

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри колхозсен уйхирĕсенче халăх тырă вырать. Тырпула вăрçăри пек ĕçлесе хăвăрт пухса кĕртмелле, авăн çапмалла, государствăна тырă вăхăтра парса татмалла. Çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлас шутпа ВКП(б) райкомĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарма тăрăшать. Агитатор пулса ĕçлеме коммунистсене, комсомолецсене, учительсене, активистсене уйăрнă. Иртнĕ çулта агитаторсем калаçусем ирттерме, стена хаçачĕсем кăларма кунне пĕр-икĕ сехете колхозниксем патне уйхире пырса кайнă пулсан, кăçал вара агитаторсем тӳрреммĕнех производствăра ĕçлеççĕ. Жнейкăсемпе, косилкăсемпе, çавапа, çурлапа тырă выраççĕ.

Пирĕн районра агитаторсем 210 çын. Вĕсем кашниех хаçатсемпе журналсем илсе тăраççĕ, кăнтăр каннă чухне тата ытти пушă вăхăтсенче колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа кăтартаççĕ, фронтри тата тылри геройсем çинчен калаçусем ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Колхозниксен уйхирти станĕсем патĕнче, бригадăсен участокĕсем патĕнче показательсен хăмисем тунă. Агитаторсем кашни кунах хăш бригада тата хăш звено лайăх ĕçлени çинчен çав хăмасем çине çыраççĕ, ĕçре малта пыракансен опытне çутатаççĕ.

«Звезда» тата «Путь Ленина» колхозсенче уйхирти стансене лайăх йĕркеленĕ. Колхозниксем уйхирте пурăнаççĕ пулин те, вĕсем пулса иртекен событисене вăхăтра пĕлсе тăраççĕ. Вĕсене отечественнăй вăрçă хыпарĕсене каласа кăтартаççĕ, кашни кунах кăнтăр канăвĕ вăхăтĕнче хаçат вуласа параççĕ.

Уборка вăхăтĕнче пирĕн районри хаçат редакцийĕ колхозсен опытне çутатса паракан «боевой листоксем» кăларать. Çапла, августăн 5-мĕшĕнче тухнă 11-мĕш номерлĕ «Боевой листокра» Киров ячĕпе тăракан колхоз уборкăри ĕçсене мĕнле организацилени çинчен çырнă. Çак колхоз ĕçе лайăх йĕркеленипе кĕр тыррисене планпа пăхнинчен икĕ кун маларах, 6 ĕç кунĕнче вырса пĕтерчĕ. «Боевой листокра» çав колхоз мĕнле ĕçлени çинчен çырни ытти колхозсенче те ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшрĕ. Сăмахран, Нариманов ячĕпе тăракан колхоз ĕçе лайăх организацилесе ултă ĕç кунĕнче ыраш вырса пĕтерчĕ, 50 гектар çинчи тырра капана хыврĕ. Ку колхозра учительница Татьяна Трофимова тырă вырать, вăлах 3-мĕш бригадăра агитатор пулса ĕçлет. Вăл кĕлте çыхнă çĕрте кашни кунах нормăна 160—170 процент тултарать. Çапла вара хăйĕн ĕçĕпе пример кăтартса тата тăрăшса ĕçлеме кирли çинчен колхозниксене ăнлантарса парса, Трофимова юлташ бригадăра социализмлă ăмăртса ĕçлессине организацилет.

Сталин ячĕпе тăракан колхозри агитатор К. Мартышкина хăй тăрăшса ĕçленипе ытти колхозниксене те ĕçре хавхалантарса пырать. Вăл ĕçлекен бригадăри колхозниксем шурăмпуç килсенех ĕçлеме тытăнаççĕ те хĕвел анса ларичченех ĕçлеççĕ, пурте ĕç нормине ирттерсе тултарса пыраççĕ.

«Маяк» колхозра учительницăсем Ф. Садриевăпа К. Насредтинова стахановла ĕçлеççĕ, алăпа пĕр кун хушшинче 0,15—0,16 гектар выраççĕ. Вĕсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, хăйсен примерĕпе лайăх ĕçлессишĕн агитацилеççĕ. Çавна пула ытти колхозниксем те лайăхрах ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех агитациллĕ ĕçре çитменлĕхсем те пур. «Кзыл Юлдуз» колхозра агитаторсем ĕçлени курăнмасть, социализмлă ăмăртăва организацилемен. Кунта вулав çурчĕ пур, анчах вăл яланах питĕрĕнсе ларать.

Ялти агитаторсен хăйсен ĕçне вăйлатмалла. Колхозниксемпе колхозницăсене уйхирте, итем çинче, тырă турттарнă çĕрте пурнăçа шеллемесĕр ĕçлеме, Хĕрлĕ Çар тата çĕршыв валли апат-çимĕç ытларах туса хатĕрлеме хавхалантарса пырас тĕлĕшпе кашни кунах ĕçлес пулать.

Э. ХАЛИКОВ.

ВКП(б) Чкаловски райкомĕн пропаганда отделĕн заведующи заместителĕ.

Ыраша пĕтĕмпех çапса пĕтернĕ

Кăнтăр канăвĕ вăхăтĕнче вĕсем патне колхоз председателĕ Ежов юлташ пычĕ.

— Ну мĕнле, юлташсем, паян ку уя тасатса пĕтеретпĕр-и?—терĕ вăл тулă пусси еннелле пăхса.

— Ман шутпа, каçчен пĕтеретпĕр. Вĕçĕ курăнать вĕт, — ответлерĕ колхозниксенчен пĕри.

Кану хыççăн ĕç татах та хĕрсе пычĕ. Кашни колхозникпе колхозница ытларах ĕçлес тесе тăрăшрĕ. Чылай колхозниксем хăйсен нормисене икшер хут ирттерсе тултарчĕç. Çак уйри тырра вĕсем каçчен вырса пĕтерчĕç...

* * *

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçалхи тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртме пулнă. Çакна вĕсем тивĕçлипе пурнăçласа пыраççĕ. Кĕрхи тырра вĕсем районра пуринчен малтан вырса пĕтерсе, пуринчен малтан çапма тытăннă. Паянхи куна ыраша пĕтĕмпех çапса пĕтернĕ, халĕ пăрçа çапаççĕ. Молотилка пĕр чарăнмасăр çĕрĕн-кунĕн ĕçлет. Колхозниксен тепĕр ушкăнĕ çурхи тырра вырать. Ĕнерхи куна вĕсем 3 гектар сĕлĕ, икĕ гектар ясмăк вырнă. Уйра икĕ жнейка, кĕреплеллĕ çавасем 15 ĕçлеççĕ. Чылай колхозниксем нормăна ытлашшипех ирттерсе тултараççĕ. Машиноведсем Т. Антипин, Д. Бойков, кĕреплеллĕ çавасемпе çулакансем М. Чекменева, колхозница Р. Булыгина тата ыттисем те нормăна 130—200 процент тултараççĕ.

Колхоз йĕтĕн татса пĕтернĕ. Халĕ ăна çапать.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем пурте халĕ тырпула хăвăртрах пуçтарса кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем хушшинче ăмăрту сарăлнăçемĕн сарăлса пырать.

Х. ЛИСИН.

Коммунист-комбайнерсем уборкăра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Телефонпа**). Байсубино колхозĕн уйхирĕнче комбайнпа ĕçлекен ВКП(б) членĕн кандидачĕ Егорова юлташ хăйĕн ĕçне юратса туса пырать. Вăл августăн 18-мĕш тĕлне 35 гектар çинчи тырра пухса кĕртнĕ. Çавăн пекех ВКП(б) членĕ комбайнер Макаров юлташ та тăрăшса ĕçлет, вăл та 35 гектар вырнă

ШЕГИЛЬЧЕВ.

Тăккаланчăксемпе кĕрешеççĕ

ШАМАРША. (**Телефонпа**). Колхозсен задачи—вăрçă вăхăтĕнче вăйлă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси пулать. Çакна ăнланса илнĕ колхозсем тырпула тăккаланине хирĕç çине тăрса кĕрешеççĕ. Вĕсем тырă вырмалли машинăсем çине зерноуловительсем лартнă. Районри 18 колхозра пучах пухас ĕçе организациленĕ. Пурĕ вĕсем 1.800 гектар çинчен пучах пухнă, çакă вăл татах та 82 центнер тырă панă. Анчах тырпулсене тăккаланине хирĕç кĕрешессине пур çĕрте те кирлĕ пек организацилемен-ха.

А. СЕРГАЧЕВ,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Хĕрлĕ ялавлă бригадăра

ШАХАСАН, августăн 20-мĕш. (**Телефонпа**). «Хĕрлĕ Октябрь» колхозри И. Ильин юлташăн бригади уборкăра малта пырать. Унăн ĕç пахалăхĕ те лайăх. Çавăншăн ăна колхозăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Бригадăри çамрăк колхозниксем В. Егоров, Л. Дмитриев, А. Петрова юлташсем нормăна кулленех 200—250 процент тултараççĕ. Вĕсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр выраççĕ, ĕçре пример кăтартаççĕ.

А. ОРЛОВ.

Колхозсем государствăна ыраш парса татаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем государствăна тырпул памалли заданисене пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшаççĕ. Район августăн 20-мĕш тĕлне тырпул памалли пилĕккунлăх графика пурнăçларĕ

«Коммунизм», «Красная Чувашия», «Красный Октябрь» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем обязательнăй поставка тата натуроплата енĕпе государствăна ыраш парса татрĕç.

В. ИГНАТЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Пятигорск** районĕнче çапăçнă.

Вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн (çав çапăçусенче противника çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем тӳстернĕ) пирĕн войскăсем **Краснодар** хулинчен тухса кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 25 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине ытла, 60 лавне çити, горючи тултарнă 8 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 6 складне тата горючин пĕр складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 12 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи икĕ эшелона çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин йышлă атакисене сире-сире пынă. Н-ски соединенин участокĕнче нимĕçсем 100 танк ытла пухса тăратнă тата вĕсене хăйсен авиацийĕпе пулăшса пынă. Тăшмана хирĕç пынă йывăр çапăçусенче пирĕн боецсем нимĕçсен 9 танкне, 11 орудине, войскăсем ларса пыракан 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 400 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Унсăр пуçне противотанковăй пăшалсен подразделенинчи боецсем нимĕçсен 22 танкне çунтарса янă е стройран кăларнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем наступлени туса пыракан нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Н-ски чаçри боецсем, гитлеровецсен атакине сирсе пырса, противникăн 4 танкне тата 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Чугунçул станцийĕ патĕнче противник пĕр батальон чухлĕ вăйпала совет чаçĕсен тылне кĕрсе кайнă пулнă. Пирĕн танкистсемпе автоматчиксем тыла кĕнĕ çав гитлеровецсене хупăрласа илнĕ те пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерин Н-ски подразделенийĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен икĕ танкне, 6 орудине тата 150 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Н-ски подразделенин участокĕнче нимĕçсен 7 танкне тата 250 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Кавалерин пĕр чаçĕ уйрăмах ăнăçлăн çапăçнă. Совет юланутçисем темиçе хутчен контратака туса нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Пятигорск районĕнче пирĕн артиллери нимĕçсен икĕ танкне, 3 броневикне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пирĕн подразделенисем активлăн çапăçса нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 3 орудине тата 4 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Пирĕн артиллери нимĕçсен 8 дзотне, 9 блиндажĕпе землянкине тата темиçе огневой точкине çĕмĕрсе тăкнă. Сержантсем Демьяненкăпа Поляков тата красноармеецсем Матвеев, Рыбаков, Ладыгин юлташсем шыв урлă ишсе каçнă та нимĕçсен траншейине çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсем нимĕçсен темиçе салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, ыттисене тыткăна илнĕ те хăйсен чаçне ăнăçлăнах таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник юханшыв урлă каçма хăтланнă. Пирĕн артиллери нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстерсе каялла сирсе пăрахнă. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен «Хейншель—126» йышши самолетне персе ӳкернĕ. Самолетăн экипажне тыткăна илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен Л. юлташăн отрядĕнчи партизансем нимĕçсен чугунçул участокне сыхлакан 2 салтакне вĕлернĕ. Гитлеровецсем хăйсен вилнĕ икĕ салтакне пытарас ĕçе организациленĕ пулнă. Партизансем нимĕçсен пытарма каякан çыннисем çине пеме тытăннă та нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене тата 18 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Мартин Покле нумаях пулмасть хăйĕн салтакĕ Вальтер Вобер патне çапла çырнă: «Хамăрăн тĕллев патне эпир хăçан та пулсан çитĕпĕр-ши? Манăн шутпала эпир хамăрăн тĕллеврен инçерех те инçерех уйăрălса пыратпăр пек туйăнать. Çакă вăл мана питĕ те тарăхтарать. Вырăссем çав тери çине тăрса çапăçаççĕ. Фронт хыçĕнче, пирĕн тылра вырăссем чăн-чăн вăрçă организацилерĕç. Талккишĕпех вăрмансем сарăлса выртнине пула тата вырăнти халăх вĕсене пулăшса пынине пула партизансен çапăçмалли условийĕсем пирĕннинчен те темиçе хут лайăхрах».

* * *

Нимĕçсемпе венгерсен отрячĕ Орел облаçĕнчи Подгородная Слободка ялĕнчи мирлĕ çынсене çав тери тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсемпе венгерсен палачĕсем хĕрарăмсене, ачасене тата ватă çынсене—пурĕ 25 çынна—штыксемпе чиксе персе вĕлернĕ. Персе вĕлернĕ çынсем хушшинче 87 çулхи Дукачева Екатерина, 70 çулхи Репина Марфа Евсеевна, 67 çулхи Репин Федот Кленович тата ыттисем те пур. Фашистла ирсĕрсем 36 çулхи Фроменкова Пелагея Федоровна колхозницăна, унăн 9 çулхи хĕрне Наташăна, ывăлĕсене: 11 çулхи Вальăна, 7 çулхи Кольăна тата 2 çулхи Ванькăна вĕлернĕ.

* * *

Чехири патриотсем Пардубице хула çывăхĕнчи вырăнсенче (Чехословакия) ялсем тăрăх ухтарса çӳрекен 18 эсесовеца вĕлернĕ.

Августăн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Пятигорск** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем темиçе хут контратака тунă. Çав çапăçусенче 7 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта противникăн мала татса кĕрсе кайнă чаçĕсем Дон шывĕ урлă каçнă, унта вĕсене совет войскисем вăйлăн хирĕç тăнă та вĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра кăна тăшманăн 18 танкне тата 500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн пехотинецсемпе танкистсем нимĕçсен наступлени тăвакан войскисене хирĕç пырса çапнă. Пĕр чугунçул станцийĕ патĕнче вăйлă çапăçу пырать, çав станци темиçе хутчен аларан алла куçнă. Н-ски танковăй подразделени 4 танк, 7 противотанковăй оруди пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăралларахри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем темиçе хут хаяррăн атакăласа, пирĕн чаçсене кăшт хĕснĕ. Н-ски подразделенири артиллеристсем нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пятигорск районĕнче пирĕн войскăсем противникăн колоннине çавăрса илнĕ те ăна пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 350 вилли, çунса кайнă 6 танкĕ тата 13 автомашини вырса юлнă.

* * *

Воронеж районĕнче юлашки пилĕк кун хушшинче нимĕçсен 5.500 салтакĕпе офицерне çити, 27 танкĕпе бронемашинине, 21 самолетне, 169 автомашинине, 2 орудине, боеприпассемпе горючи усракан 11 складне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Пĕр участокра пирĕн артиллери сасартăк вăйлăн пеме тытăнса тăшманăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Дон шывĕн хĕвеланăç енче халăх пурăнакан пунктăн урамĕсенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Ĕнер каçхине противник пехотăн 4 батальонне çити вăйпа тата танксем пулăшса пынипе контратака тунă, анчах та ăна пирĕн чаçсем сирсе пăрахнă.

* * *

Тăвата партизан Я., О., Е. тата А. юлташсем Ленинград облаçĕн пĕр районĕнче чугунçул çинчи кĕпере ун урлă противникăн çар эшелонĕ каçнă вăхăтра сирпĕнтерсе янă. Паровоз тата 8 вагон çĕмĕрĕлнĕ. 150 гитлеровецран кая мар вилнĕ. Çав вырăнтан каялла кайнă чухне партизансем засадăна лекнĕ, пуçланса кайнă çапăçура вĕсем тата 20 оккупанта пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 218-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 323-мĕш полкран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Ганс Шредер çапла каласа панă: «Германи командованийĕ пире улталать, нимĕç войскисем хĕвел-

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

тухăç фронтĕнче тунă сухатусене пиртен пытарать. Çапăçусенче пулнă кирек хăш салтак та пысăк сухатусем тÿснине пĕлет. Темиçе уйăх каялла верховнăй командовани çулталăк хушшинче миçе нимĕç салтакĕ вилнине кăтартакан цифрăсене пичетлерĕ. Фронтри е тылри ăс-пуçлă пĕр çын та çав цифрăсене ĕненмест. Салтаксем вĕсенчен тăрăхласа кулаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: «Ултавçă Геббельс ытла та ăнăççăр шÿт туса илчĕ, вăл пире пысăк ухмахсем вырăнне хурать пулмалла», теççĕ.

* * *

Воронежран кăнтăралларахри районра çапăçакан Н-ски чăçри красноармеецсемпе командирсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарни çинчен акт çырнă. Вăл актра çапла каланă: «Нимĕçсенчен тытса илнĕ рацара пирĕн боецсен икĕ вилĕнне тупса палласа илнĕ, вĕсене нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсем М. К. Огнев красноармеецăн сăмсине касса илнĕ, сулахай аллине татса пăрахнă тата пырне касса татнă. Старши сержанта В. П. Корнева фашистсем йывăç сумне йĕплĕ пралукпа çыхса хунă та ăна çав тери тискеррĕн асаплантарнă. Вĕсем тыткăна лекнĕ совет командирĕн хăлхисене касса татнă, куçĕсене шăтарнă, çамки çинче пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр касса кăларнă. Унтан гитлерла ирсĕрсем Корнева йывăç сумне штыкпа чиксе пăталаса лартнă». Çав акта старши лейтенант П. И. Петров, политрук З. Н. Ломов, красноармеецсем Г. В. Нечаев, К. Г. Ахмедов тата А. И. Зимин алă пуснă.

* * *

Югославири партизансен отрячĕсем итальянецсен Нова Штифта пунктĕнчи гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă тата Кочевье станцийĕ çывăхĕнче çар поездне ÿпĕнтерсе янă. Çав районра темиçе кун хушши пынă çапăçусенче итальянецсен 320 çын вилнĕ, 500 çын ытла аманнă. Утравсем çинче кĕрешекен партизансен отрячĕсем Итали жандармĕсен темиçе отрядне пĕтерсе тăкса, вĕсенчен хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Партизансен аллине оккупантсен продовольстви усракан пысăк склачĕсем лекнĕ, çав продовольствие партизансем Югославири выçă пурăнакан халăха валеçсе панă.

Чурасен рынокĕ

Нимĕçсен фронтран тата фронта яракан çырăвĕсен пысăк ушкăнне çак кунсенче пирĕннисем тытса илнĕ. Каторгăри éçе, Германие, илсе кайнă вырăс çыннисене нимĕçсем хăйсен çырăвĕсенче уççăнах чурасем тесе чĕнеççĕ. Чĕрĕ тавар туянни çинчен вĕсем нимĕн намăса пĕлмесĕр çыраççĕ. Аппăшĕ-амăшĕсем хăйсен фронтри ывăлне вĕсем вырăс çыннисен ушкăнне туянни çинчен пĕлтерсе савăнтарма васкаççĕ. Ывăлĕ хăй енчен аппăшĕ-амăшне чурасем туянма васкатать. Фриц Гребер салтак патне унăн амăшĕ Лайбтрапа: вăрçă ăна тупăш парать — калĕ унăн Украинăран илсе килнĕ вырăс хĕрĕ — чура пур, тесе çырать. Фрау Гребер вăрçăшăн савăнать.

«Вăрçа пула эпир лайăх éç вăйĕ — Украинăран илсе килнĕ хĕре туянтăмăр, вăл 21 çулта. Фрау Леман унăн аппăшне туянчĕ. Вăл 26 çулта, вăл пирĕншĕнчен вăйлăрах. Эпĕ унăн аллисемпе урисенчи мускулĕсене пăхрăм. Анчах юрĕ ĕнтĕ — пирĕн те ĕçлĕ-ха».

Тепĕр çыру. Подрядчик Лоренц Шнеер хăйĕн кĕрÿшне Юзеф Шнеер салтака савăнтарма васкать:

«Пирĕн патра халĕ ĕнтĕ 19 çулти Украина хĕрĕ ĕçлет. Вырсарникун яла тата 20 вырăс килсе çитессĕ. Эпĕ хам пата темиçе штука илетĕп».

Мария Айхер Пруссири пĕр ялтан хăйĕн Иоганн ятлă упăшки патне çавăн çинченех çырать:

«Пирĕн яла халĕ вырăссене хăваласа килчĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ хама валли юрăхлă тарçă шыратăп. Унашкалли халлĕхе çук-ха. Тепĕр ушкăн килессине кĕтмелле пулать».

Вырăс чурисемпе—арçынисемпе, хĕрарăмсемпе, хĕрсемпе тата ачасемпе сутă тăвасси Германире ытларах та ытларах сарăлса пырать.

Акă совет тыткăна лекнĕ çар çыннисене Крумбах ялне (Баден) хăваласа пынă. Нимĕç салтакĕн Карл Бишофăн аппăшĕ чурасен çав рынокĕ çинчен çапла сăнласа çырать:

«Хресченсен руководителĕпе бургомистр иккĕшĕ вырăссене валеçсе панĕç. Кашни ĕçченрех работниксене ытларах туянма тăрăшать. Тĕрĕслĕх çуккине çакăнта эпир таках та тепĕр хут туйса илтĕмĕр. Вырăссенчен ахаль те çителĕклĕ таранах тарçă тытакан нумай çынсем татах та темиçешер хĕр туянчĕç».

Карл Бишоф салтака чурасем валеçнĕ чухне тÿпесĕр хăварнă. Унăн арăмĕ çавна пула тарăхать:

«Халлĕхе пире нимĕн те памарĕç. Безобрази! Тепĕр каласан, эпĕ ытлашшипех хыпмастăп — чурасен ку ушкăнĕ начартарахскер пулчĕ. Пирĕн ялта вĕсем, 19 çултан пуçласа 40 çула çитичченхисем, 80 штука. Вĕсем çавтери ырханланса çитнĕ — вĕсен тирĕсемпе шăммисем кăна тăрса юлнă. Пурте вĕсем юнлă варвиттипе чирлĕ. Вĕсем ĕçлеме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем халран кайнă».

Нимĕçсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ефрейтор Вильгельм Стофф хăйĕн амăшĕнчен Швайгхаузенран çакăн пек çыру илнĕ:

«Пирĕн сĕт-çу фермине те ултă вырăс пур. Вĕсене çаçхине витене хупаççĕ. Вĕсем хушшинче 14—15 çулти çамрăк ачасем пур. Ан иккĕлен, вĕсем ĕçлеме пултараççĕ».

Нимĕç надсмотрщикĕ тыткăнри пирĕн тăвансене чăпăркапа хĕнет. Анчах та ку нимĕçсемшĕн сахал. Итлĕр-ха мĕн çырать Иоганн Фогель ефрейтор хăйĕн тăванĕсем патне Мюльгейма:

«Сирĕн пата та вырăссем çитнĕ пулас. Эсир вара вĕсене лайăх сăнаса тăрăр. Эпĕ хам килте пулас пулсан, вĕсене ĕçлеме вĕрентнĕ пулăттăм».

Германири чуралăха ирĕксĕрлесе илсе кайнă пиншер те пиншер совет çыннисем Кельнри вырăс хĕрĕн шăпине тÿссе ирттереççĕ.

Нимĕç пусмăрçисене хирĕç çĕкленекен пирĕн хурăймаллăхăн вĕçĕ-хĕрри çук. Çав пусмăрçăсене — вилĕм!

(«Красная Звезда» хаçатран).

„Британский союзник“ журнал

Вырăс чĕлхипе эрнере пĕрре тухакан «Британский союзник» ятлă иллюстрациллĕ журналăн пĕрремĕш номерĕ тухнă. Ăна Великобританин информаци министерстви Куйбышев хулинче кăларать.

«Хăйĕн çĕрĕпе хăйĕн тăван килĕшĕн кĕрешекен кашни вырăс çынни ĕçĕ—вăл çĕр чăмăрĕн кирек-мĕнле пайĕнче пурăнакан ирĕклĕ çынсемпе ирĕклĕ халăхсен ĕçĕ те пулса тăрать». Уинстон Черчиллĕн çак сăмахĕсене пĕрремĕш полосара панă. Унта Великобританин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Антони Иден тата Великобританин информаци министрĕ г. Брендон Брекен вулакансене чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

«1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа эпир хĕçпăшал тĕлĕшпе юлташсем пулса тăтăмăр,—тесе çырать Антони Иден.—1942 çулти майăн 26-мĕшĕнчен пуçласа эпир пирĕн пĕтĕмĕшле ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн Европăра сахалтан та 20 çул хушши пĕрле ĕçлеме пĕтĕм халăх умĕнче сăмах патăмăр. Сирĕн хăвăрăн юлашки 20 çул хушшинчи истори çавăн пек срокра мĕн тери пысăк ĕçсем тума пултарнине кăтартса парать.

Британи халăхĕпе совет халăхне пĕрпĕрне ăнланса тата хисеплесе пĕрле ĕçлеме тÿрĕ килсе тухрĕ пулсан, вĕсем пĕр-пĕрин çинчен ытларах пĕлме тивĕçлĕ».

Журналăн çав номерĕнче пĕрремĕш тинĕс лорчĕ тата тинĕс штабĕн начальникĕ флотăн адмиралĕ сэр Дэлли Паунд, бомбардировочнăй авиацин главнокомандующийĕ—авиацин маршалĕ сэр Артур Гаррис каланисене пичетленĕ.

Çавăн пекех тата унта ССР Союзне хĕçпăшал турттарни çинчен тинĕс офицерĕ каласа панине тата нимĕçсен подводнăй лодкине тыткăна илни çинчен летчик каласа панине, Англири çар завочĕсенчен ÿкерсе илнĕ ÿкерчĕксене, Англи авиацийĕ Германи çине массăллăн вĕçсе пырса тапăннине кăтартакан «Сывлăш рейчĕсен штабĕнче» ятлă очерка, Британи çарĕн ударнăй отрячĕсем çинчен—десант чаçĕсем çинчен калакан фото-информацисене пичетлесе кăларнă. Десант чаçĕсене кăтартакан ÿкерчĕксем айне «иккĕмĕш фронтăн авангарчĕ» тесе çырнă.

«Британский союзник» журнала совет çыннине Британи халăхĕ вăрçă тĕлĕшпе мĕнле вăй хурса ĕçленине тата вăл мĕнле пурăннине кăтартса парас тĕлĕшпе кăлараççĕ. Çавăн пекех вăрçă пуçланнăранпах Лондонра тухакан «Советские военные известия» журнал та Англири вулакансене совет халăхĕ гитлерла Германие хирĕç вăрçни çинчен каласа парать. (ТАСС)

—⊙—

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индире халĕ те пăлханусем пыраççĕ-ха.

21 хаçатăн редакцийĕсем, çав шутра англичанин чĕлхипе тухакан 6 хаçатăн редакцийĕсем те, августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа тухма чарăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Пир-авăр ытларах туса кăларассишĕн

Пирĕн фабрикăсемпе заводсен коллективĕсем умĕнче халĕ питех те пысăк задача тăрать: технологи процессне лайăхлатса, производствăна çĕнĕлле йĕркелесе, рабочисен квалификацине ÿстерсе пырса продукци ытларах туса кăлармалла. Пирĕн халĕ кашни станока, машинăна, агрегата туллин ĕçлеттерес пулать, техникăран мĕн илме май пуррине пĕтĕмпех илес пулать.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту рабочисен ĕçри çĕкленĕвне пуçарчĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ. Кашни рабочипе работница паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

Шупашкарти пир-авăр фабрикин коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пир-авăр промышленноçĕн предприятийĕсем хушшинче малти вырăна тухассишĕн кĕрешет. Коллектив июль уйăхĕнче продукци туса кăларас плана ăнăçлăн тултарчĕ, август уйăхĕн малтанхи çурринчи заданине те ирттерсе пурнăçларĕ.

Рабочисемпе работницăсем ĕç техникине çине тăрса вĕренеççĕ. Чылай участоксенчи работницăсем хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Халĕ çеç вĕренсе тухнă çамрăк ватерщица Корчаткина юлташ нормăна 110 процент тултарать. Çавăн пекех Рассказова, Кузнецова, Пупцова, Пичуткина, Хвастунова т. ыт. работницăсен ĕç тухăçлăхĕ те нормăпа пăхнинчен пысăк.

Квалификациллĕ работницăсем хатĕрлес тĕлĕшпе мастерсем Фомичев (арлакан фабрика) тата Сазонова (тĕртекен фабрика) юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем чылай хĕрачасене çип арлас тата пир тĕртес ĕçе вĕрентсе çитерчĕç, халĕ те вĕрентеççĕ.

Рабочисен квалификациллĕ кадрне хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха. Техника минимумне вĕрентмесĕр, оборудованисемпе усă курас ĕçе вĕрентмесĕр пĕр рабочипе работницăна та хăвармалла мар. Ĕçе хăвăртлатмалли майсем тупни, кашни минутăпа туллин усă курни, пĕр вăхăтрах темиçе ĕçе тума пĕлни—çаксем пулаççĕ ĕнтĕ ĕç тухăçлăхĕпе хăвăртлăхне ÿстермелли майсем. Çак майсемпе кашни çамрăк рабочипе работницăна паллаштарас пулать.

Рабочисене унпа пĕрлех оборудованисене культурăллă тытма, вĕсене вăхăтра тасатма, çу сĕрме тата юсама та вĕрентмелле. Цехсен администрацийĕсем умĕнче оборудованисене юсас тата упраса усрас графика тĕрĕс пурнăçласа пырас задача тăрать.

Фабрика ĕçĕнче хальхи вăхăтра çитменлĕхсемпе кăлтăксем те пур-ха. Арлакан фабрикăн ĕç хатĕрĕсем çитмеççĕ. Çав хатĕрсен запасĕ мĕнпур тухăçлăхпа ĕçлеме çителĕклĕ мар. Апла пулин те фабрика хăйĕн резервĕсемпе пĕтĕмпех усă курма тивĕçлĕ. Çавна тума станоксемпе туллин усă курни, ĕçри кăлтăксене пĕтерни пулăшмалла. Халĕ час-часах шнурсем таталнă пирки йĕкесем пушă чупаççĕ. Çакна эпир тÿсме пултараймастпăр. Мастерсен задачи—станоксене пурне те пĕр пек ĕçлеттересси, кашни станокран ытларах продукци илесси пулать. Оборудованисем ахаль тăрассине пĕтермелле, ĕçе лайăхрах организацилемелле.

Ку енĕпе тумалли тепĕр ĕç вăл—çĕнĕ станоксемпе арлакан йĕкесене ĕçе кĕртсе, производствăна анлатасси пулать. Фабрикăн арланă продукцие, çавăн пекех тĕртнĕ продукцие те çитес çывăх вăхăтрах икĕ хут ÿстерсе кăлармалла май пур. Кун çинчен продукци туса кăларасси уйăхран уйăха ÿссе пыни те аванах калать. Июль уйăхĕнче эпир июньринчен тухăçлăрах ĕçлерĕмĕр, августра июльринчен лайăхрах ĕçлеме тивĕçлĕ. Ку уйăхра эпир вуншар пин çынна тумлантармалăх пир-авăр туса кăларатпăр. Задача—сентябрьте июльринчен ирттерсе татах 20—25 пин çынна тумлантармалăх пир-авăр туса кăларасси пулать. Çакна эпир пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ тата пултаратпăр та.

Пирĕн, унпа пĕрлех, чĕртаварпа лайăх усă курса, пĕчĕк хака ларакан продукци парассишĕн кĕрешес пулать. Хальхи вăхăтра эпир çак задачăна пурнăçланă теме пултараймастпăр-ха. Таварăн хăйне ларакан хакĕ йÿнелсе пымасть, çавăн пекех туса кăларнă пир-авăр планпа пăхнинчен 20 процент чухлĕ хакла ларать. Çакна пĕтерес тесен, çĕрмамăкĕн кашни грамĕпе, çипĕн кашни сантиметрĕпе усă курни кирлĕ, чĕртавара усăсăр пĕтерни пулмалла мар.

Пирĕн фабрикăра юлакан чĕртаварăн юлашкисене вырăнти промышленность предприятисенче анлăн усă курма май пур. Калас пулать, хулари промкомбинат, промысла союзĕсен чылай артелĕсем пирĕн производствăра юлнă чĕртаварпа çителĕксĕр усă кураççĕ. Вĕсемпе усă курни çĕршыва сахал мар чăлхасем, пир, ватка т. ыт. продукци пама пултарать.

Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, пĕр фабрикăри рабочисемпе служащисен çеç мар, ытти предприятисен коллективĕсен те пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлес пулать. Ĕçре пĕр-пĕрне пулăшни, пĕр предприятире производствăра юлнă чĕртаварсемпе тепĕр предприятире усă курни çĕршывпа фронта татах та нумайрах продукци пама пулăшать. Çакна асра тытса, ĕçре пурнăça кĕртсе пымалла.

И. ЧЕРНЫШОВ,
Пир-авăр фабрикин главнăй инженерĕ.

Ют çĕршывсенче

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче иккĕмĕш фронта часрах уçассишĕн пыракан движени ÿссе пырать

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче Европăра иккĕмĕш фронта часрах уçассишĕн пыракан обществăллă движени палăрмаллах ÿссе пынă. Тĕрлĕ штатсенче профсоюзсен тата ытти организацисен массăллă митингĕсем пулапула иртеççĕ, çав митингсем Европăра иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтаççĕ.

Ньюаркра (Нью-Джерси штатĕнче) йышлă демонстраци пулса иртнĕ, унта 75 пин çын хутшăннă. Демонстрантсем Европăра халех иккĕмĕш фронт уçма ыйтса çырнă плакатсем йăтса пынă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи промышленность тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк центр пулса тăракан Питсбургра конференци пулса иртнĕ, çав конференцире Производствăллă Профсоюзсен Конгресĕн тата Америкăри Ĕç Федерацийĕн лидерĕсем, США конгресĕн членĕсем, Америкăри мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ Гунтер тата ыттисем те пулнă. Конференцире пулнă çынсем Рузвельт патне телеграмма янă, çав телеграммăра вĕсем Европăра иккĕмĕш фронт уçма ыйтаççĕ тата хăйсем кирек мĕнле жертвăсем тума та хатĕрри çинчен калаççĕ.

Производствăллă Профсоюзсен Конгресĕн Детройтри професиллĕ центрĕ тунă массăллă митингра 20 пин çын пулнă. Митинг Европăра иккĕмĕш фронт уçма ыйтса Рузвельт патне телеграмма янă.

Промышленноçлă пысăк хулан—Кемден хулин мэрĕ (Нью-Джерси штачĕ) Браннер тата профсоюзсен темиçе деятелĕ хăйсен Рузвельт патне пĕрле çырнă çырăвне çакăн пек сăмахсемпе вĕçлеççĕ: «Парăнас текенсене пăрса ярар. Пысăк хăвăртлăхпа малалла. Эпир иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтатпăр».

Рузвельт патне çавăн пек ыйтса тата çаксем çырусем янă: Сиэтлири 5 пин çынлă митинг, Беверли хулинчи (Массачузетс штачĕ) электриксен профсоюзĕ, Нью-Йоркри суту-илÿ работникĕсен профсоюзĕ, Цинципати хулинчи (Огайо штачĕ) механиксен профсоюзĕ, Филадельфири чугунçул служащийĕсен профсоюзĕ тата çамрăксен организацийĕсен 60 руководителĕ çырусем янă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Югославири партизансен çарĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ключостряды хулине ирĕке кăларнă хыççăн çурçĕрелле малалла куçса пырса, партизансем Саница тата Санский мост хулисене йышăнса илнĕ. Тăшманăн чĕрĕ вăйне чылай пĕтерсе тăкнă, нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Центрти Боснире, Босанская Краинăра тата Далмацин нумай районĕсенче çапăçусем пĕр кунлăха та чарăнмаççĕ. Заградец патĕнчи тытăçура партизансем итальянецсен колоннине аркатса тăкнă. Камильцея тата Подстенице районĕсенче оккупантсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла вĕлернĕ тата амантнă.

Копривник ялĕ патĕнче К. ертсе пыракан отрядри партизансем итальянецсен 2.000 çынран тăракан колонни çине пенĕ.

Партизансем ирĕке кăларнă территорисене каялла тавăрма хăтланса, итальянецсем партизансене хирĕç войскăсен пысăк чаçĕсене янă. Итальянецсен çынсем тата техника нумайрах пулнă пирки вĕсем темиçе хулапа яла каллех хăйсен аллине тытса илме пултарнă. Партизансен Любляно тата Кочевье хулисемпе Купа шывĕ хушшинчи темиçе уездран ирĕксĕрех чакмалла пулнă.

Хăйсем тытса илнĕ территорисенче итальянецсем калама çук тискер ĕçсем тăваççĕ— ялсене пĕтĕмпех çунтарса яраççĕ, арçынсене пурне те вĕлереççĕ, чĕрĕ юлнисене Италие чуралăха илсе каяççĕ.

Тискер террора пăхмасăрах Югослави хресченĕсем оккупантсене хирĕç паттăррăн тăраççĕ. Нумай ялсенчи çынсем пурте вăрмансене тарнă, хăйсемпе пĕрле продовольстви илсе кайнă тата выльăх-чĕрлĕхе хăваласа кайнă. Чылай ялсенче хресченсем хĕçпăшалпа хÿтĕленеççĕ, итальянецсен карательнăй отрячĕсен тапăнăвĕсене сире-сире яраççĕ. Хресченсем çулйĕрсене пăсса тăкаççĕ, укрепленисем тăваççĕ. Июль уйăхĕнче кăна партизансен пĕр ушкăнĕ чугунçул линине темиçе километр хушши çĕмĕрсе тăкнă, 20 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 10 паровоза пĕтерсе тăкнă, çар турттарса пыракан 13 поезда ÿпĕнтерсе янă, тăшманăн çĕршер салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

«Свободная Югославия» радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ливно хулине илнĕ чухне партизансем нумай салтака тыткăна илнĕ, вĕсен шутĕнче вырăнти гарнизонăн командующийĕ нимĕç майорĕ Иорга тата паллă палач, усташисен капитанĕ Водопия, Югославин 500 ытла партизанне персе вĕлернĕскер, пур. Урамри çапăçусем вăхăтĕнче усташисене 200 çынна ытла тата нимĕçсен 45 салтакне вĕлернĕ. Пулеметсем, гранатăсем, винтовкăсем, патронсем, автоматсем, тумтирсем тата ытти çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Англи истребителĕсен ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: ĕнер кăнтăрла «Спитфайр» йышши истребительсем Гавр районĕнчен пуçласа Дьепп, Абвиль тата Остенде патне çитичченех сарлака фронтри вырăнсем çине темиçе хутчен вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă.

Противникăн самолечĕсем Англин Ла-Манш çыранĕнчи темиçе пункчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса сиен кÿнĕ, вилнисемпе аманнисен хисепĕ пысăк мар.

АНГЛИ ДЬЕПП РАЙОННЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Комбинированнăй операцисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине ирех Францин оккупациленĕ зонинчи Дьепп районне англичансем пырса тапăннă. Операцисем халĕ те пыраççĕ-ха.

Франци халăхне радио тăрăх çапла пĕлтернĕ: ку операцие континент çине пырса кĕни тесе шутламалла мар, тенĕ.

Англи авиацийĕ Майнц çине вĕçсе пырса тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Англи бомбардировщикĕсем августăн 12-мĕшĕпе 13-мĕшĕнче çĕрле Майнца хаяррăн атакăланă. Майнц çине кăнтăрла вĕçсе пырса тапăннă чухне ÿкерсе илнĕ фотографи ÿкерчĕкĕсем çав атакăсемпе пушарсене тата фугаслă бомбăсем çурăлнине пула хула чылай çĕмĕрĕлнине кăтартнă. Çĕмĕрĕлнĕ вырăнсен пĕтĕм лаптăкĕ 135 акра çитет. Майнцăн мĕнпур районĕсене тата унăн çумĕнчи вырăнсене пысăк сиен кÿнĕ. Питĕ пысăк темиçе завод е çĕмĕрĕлнĕ, е хытă сиенленнĕ. Тĕп товарнăй станцин склачĕсем çунса кайнă. Чугунçул çинче грузсем тиенĕ темиçе состава пĕтерсе тăкнă. Вырăнти суднăсем тăвакан верфьсене те чылай сиенленĕ.

КАНАДА ВОЙСКИСЕМ АНГЛИЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англие Канадăн суднисен караванĕ пырса çитнĕ. Çав караван специальнăй войскăсен, моряксен тата летчиксен çĕнĕ контингентне илсе пынă. Атлантика океанĕ урлă вăл ăнăçлăн каçнă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ОСНАБРЮК ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНТЕРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çĕрле Германин промышленноçпа чугунçул тĕлĕшĕнчен паха пулса тăракан центрĕ çине—Оснабрюк çине вĕçсе пырса тапăнни сехет çурра пынă. Хулари тата хула тулашĕнчи тĕрлĕ объектсем çине çунтаракан тата фугаслă питĕ те шултăра бомбăсем 50.000 бомба ытла пăрахнă. Хулана чылай пысăк сиен кÿнĕ.

Па-де-Кале урлă икĕ енчен те артиллерирен пени

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен Гри-Нэ сăмсахĕнче тата Калере вырăнаçтарса лартнă йывăр орудийĕсем Дувр районне пеме тытăннă. Англи батарейисем вĕсене хирĕç пеме пуçланă; çапла икĕ енчен те артиллерирен хаяррăн пеме тытăннă.

ЧЕРЧИЛЛЬ КАИРТА ПУЛНИ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Каирта паян çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: Великобританин премьер-министрĕ Уинстон Черчилль Мускава каяс умĕн Каирта пулнă, унпа пĕрле унта империн генеральнăй штабĕн начальникĕ сэр А. Брук пынă. Черчилль Каира Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйсен руководителĕсемпе тата Англи влаçĕсемпе калаçма пынă. Каиртан вăл Мускава тухса кайнă. Каирта пулнă чухне премьер-министр Хĕвеланăçĕнчи пушхире кайса килнĕ, вăл Эль-Аламэйн-Рувей-Сап фронтĕнче войскăсемпе пĕр кун каçнă. Çав канашлура пулма Каира пынă çынсем хушшинче Кăнтăр Африка Союзĕн премьер-министрĕ Сметс тата Англин Индири хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ генерал сэр Арчибальд Уэйвелл пулнă. Çав калаçу вăл Черчилльпе фельдмаршал Сметс вăрçă пуçланнăранпа пĕрремĕш хут курнăçса калаçни пулнă.

Каирта У. Черчилль Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем çинчен государственнăй министрпа Ричард Кэзипе тата Англи посолĕпе Пайлс Лемпсонпа калаçнă.

Вăрçă çывăхĕнчи вырăнсенчен куçса килнĕ çынсене Шупашкар хулинче хваттере вырнаçтарасси çинчен

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполнительнăй Комитечĕ кăларнă распоряжени

Куçса килнĕ халăха хваттере вырнаçтарасси пирки вырăнти исполкомсемпе советсем распоряженисем кăларма пултарни çинчен ВЦИК-па РСФСР Совнаркомĕ 1931 çулти мартăн 30-мĕшĕнче кăларнă постановлени тăрăх тата «Çынсене вăрçă вăхăтĕнче куçарас йĕрке çинчен» СССР Совнаркомĕ 1941 çулти июлĕн 5-мĕшĕнче кăларнă постановлени тăрăх, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ çапла йышăнать:

1. Вăрçă çывăхĕнчи вырăнсенчен куçса килнĕ çынсемпе вĕсен çемьисене, Шупашкар хулинчи предприятисенче, учрежденисенче ĕçлекенскерсене, коммунальнăй, ведомственнăй тата уйрăм çынсен çурчĕсенче хваттере вырнаçтарас, çавна май çав çуртсенче пурăнакансене хĕсĕнерех пурăнмалла тăвас.
2. Вăрçă вăхăтĕнче Шупашкар хулинчи пурăнмалли пур çуртсенче те пурăнмалли хваттерсен калăпĕшĕн нормине кашни çын пуçне 3,5 квадратлă метртан ытла мар тăвас
3. Çак распоряженин 1-мĕш параграфĕнче кăтартнă çынсене хваттере вырнаçтарса тухас май, пурăнмалли çуртсен управленин начальникне Колбасов юлташа, коммунальнăй тата уйрăм çынсен мĕнпур çурчĕсенче пурăнмалли хваттерсен калăпĕш мĕн чухлине 3 кун хушшинче шута илсе тухма хушас.
4. Ведомствăсен, предприятисен, учрежденисен мĕнпур руководителĕсене, çуртсен управляющийĕсене, комендантсене тата уйрăм çуртсен хуçисене те пурăнмалли çуртсен управленийĕ çулте асăннă çынсене çак распоряженире кăтартнă пек хваттере вырнаçтарса тухасси çинчен панă распоряженисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама хушас.
5. Шупашкар хула милицин начальникне Скворцов юлташа пурăнмалли çуртсен управленийĕ ордер парсан çеç çынсене хваттере вырнаçтарма тата хуларан каякан çынсене тĕрĕс шута илсе пыма хушас; çынсем хваттере вырнаçни тата хваттертен тухни çинчен пурăнмалли çуртсен управленине кашни 3 кунрах пĕлтерсе тăма хушас.
6. Тăваттăмĕш параграфра кăтартнă çынсене, вĕсем çак распоряжение пурнăçа кĕртмесен тата пăсса пырсан, ответ тыттараççĕ: 100 тенкĕ таран штраф параççĕ е пĕр уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тăваççĕ; распоряжение пурнăçа кĕртессинчен тÿрремĕнех пăрăнакансене судпа айăплаççĕ.
7. Çак распоряжени пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăрассине хулари милицин органĕсем çине, пурăнмалли çуртсен управленийĕ тата хула Совет исполкомĕн Коммунальнăй отделĕ çине хурас.
8. Çак распоряжени ăна пичетленĕ хыççăн вăя кĕрет тата вăл Шупашкар хулин территорийĕ çине (ку территорие Чапаевски тата Сосновка поселокĕсем, хула çывăхĕнчи колхозсем кĕреççĕ) сарăлать.

Шупашкар хула Совет Исполкомĕн председателĕ И. ЗОЛОТНИКОВ.
Шупашкар хула Совет Исполкомĕн секретарĕ Л. МЫШКИНА.
1942 çулти августăн 10-мĕш.

—⊙—

Ĕне икĕ пăру тунă

Комсомольски районра Аслă Çĕрпÿеленчи Василий Петров колхозникăн ĕни кăçал икĕ пăру туса панă, пăрусем пĕри тына, тепри вăкăр. Халĕ вĕсем лайăх ÿссе пыраççĕ.

КАШКĂР МИКУЛИ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

«Всесоюзному тресту срочно требуются для работы в городах (Чебоксары, Сарапуль, Москва и другие) знакомые с учетом строительных работ—главные бухгалтера, заместители главных бухгалтеров и бухгалтера-ревизоры. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Дом печати, 4 этаж, комн. № 44 к Главному бухгалтеру Треста. 2—1.

Заочное отделение Чувашского Государственного Педагогического института продолжает прием заявлений на заочное обучение до 1 октября с. г. на факультеты Педагогического и Учительского институтов: исторический, языка и литературы (с отделением русского языка и литературы и чувашского языка и литературы), физико-математический и естествоведческий.

Правила приема об'явлены в газете «Красная Чувашия» от 6 июня с. г.
Дирекция.

Чувашской конторе Сельхозснабжения срочно требуются главный бухгалтер и бухгалтер. Квартира предоставляется.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Калинина, д. 34, тел. 0.94.

Утерянные: круглую печать и доверенности Йошкар-Олинского заготпункта Марийской АССР на имя заведующего заготпунктом Главснабторга Коровина Н. С. считать недействительными.
Директор базы.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 983 Типографи №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.